Йӑлмахва ял библиотеки

# Ҫӗнтерӳ уявӗ

Сценарине ҫыраканӗ
Йӑлмахва ял библиотекин ертӳҫи
Альбина Ефремова

Йӑлмахва ялӗ
2020

**Тĕллевсем**: Вăрçăра пулнă тата çапăçу хирĕнче пуçĕсене хунă паттăрсене хисеп тăвасси; ентешсен паттăрлахĕпе мухтанасси.

**Задачисем:** Тăван çĕр-шыва хисеплеме, хаклама, юратма вĕрентесси; ачасен тавра курăмне аталантарасси.

**Ертӳçĕ:** Майăн 9-мĕшĕнче 1941-1945 çулсенчи Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçинче фашистла Германие çĕнтернине халаланă митинга уçма ирĕк парсамăр.

**Тăван çĕр-шыв Гимнĕ янăрать. (кĕв. А.Александровăн, сăв.С.Михалковăн)**

**1-мĕш ача:** Тӳпе йăлтăр таса,

Сывлăш уçă ытла!

Кĕрлесе, янраса

Вăранать ял-хула.

Кашнин сăн-питĕнче

Çутă савăнăç куран.

Епле хӳхĕм тĕнче-

Мир уявĕ паян!

**Ертӳçĕ**: Ырă кун, хаклă ĕçпе тыл ветеранĕсем, хăнасем, ял-йыш! Паян эпир Çĕнтерӳ кунĕ 75 çул тултарнине уявлатпăр.

**Юрă « День Победы» (кĕв. Д.Тухмановăн, сăв.В.Харитоновăн)**

**2-мĕш ача:** Сар хĕвел çине пăхса савăнар!

Çĕнтерӳ юрри шăранать ян та ян.

Ĕмĕрне сӳнми чап- мухтавăмăр

Çутатса тăрать тĕнчене паян.

Паттăрсем çине пăхса савăнар!

Мăн уяв кунне саламлаççĕ вĕсем.

Чĕресем тулли пирĕн тăвнăмăр,

Чыс-салам сире, çĕнтерӳçĕсем!

И.Тукташ

**Юрă «Журавли» (кĕв. Я.Френкелĕн, сăв.Р.Гамзатовăн)**

**3-мĕш ача:** Салтак паян та салтаках,-

Юрлать ят-сумлă ветеран.

Юн юхтарман эпир таках,

Тăшман килсессĕн çич ютран.

Пĕрре кăна-и çĕр-шыва

Хупланă хамăр ӳтпеле?

Çĕнтернĕ çулăмлă шава,

Тасалнă çăлтăрлă тӳпе.

**«Баллада о красках» ( кĕв. О.Фельцманăн, сăв. Р.Рожденственскиĕн)**

**4-мĕш ача:** Салтак паян та салтаках,-

Юрлать мухтавлă ветеран.

Канма манса каять ака,

Ăна шанать хура тăпра.

Çурт хыççăн çурт çĕклет хитре,

Унра тăрать хура тĕтре.

Вылять ыр кулă сăн-питре,

Телей тупать салтак ĕçре.

Утать фронтри хастарлăхпа

Çунатлă халăх ретĕнче,

Вал миршĕн хунă вăй-халпа

Чечекленсе пырать тĕнче.

**Юрă «Бери шинель, пошли домой» (кĕв. В.Левашовăн, сăв. Б.Окуджавăн)**

**Ертӳçӗ:** 75 çул иртрӗ. Кайнлӑк ял тӑрӑхӗнчен вӑрçӑ хирне 305 çын фронта тухса кайнӑ, вӗсенчен 181 çын каялла таврӑнайман, çапӑçу хирӗнче выртса юлнӑ. Пирӗн Йӑлмахва ялӗнчен вара вӑрçа 93 кайна, 62 пуçӗсене хунӑ. Паянхи куна вӑрçӑ ветеранӗсем пирӗнпе пӗрле çук ӗнтӗ. Вӗсем çут тӗчерен уйрӑлса кайнӑ. Шеллемерӗ вӗсене вӑхӑт. Канӑç памарӗç суранӗсем.

**5-мӗш ача:** Вӑрçӑ ветеранӗсене.

Тӑнлавсене вут-вӑрçӑ кӑвакартнӑ,
Кӑвакармаççӗ орден-медальсем.
Çук, ватӑлмастпӑр, тӑшмана аркатнӑ,
Кӗлрен хула çӗкленӗ салтаксем!
Тӑван çӗр-улӑх, юрату, хаярлӑх,
Хӑватлӑ чӑнлӑх çыннисем пуртан
Эсир çӗнтернӗ. Ӗмӗр пархатарлӑ
Ӗçе пикеннӗ-чунӑр ыйтнӑран.
Чылайӑн вӑрçӑ хирӗнчех пуç хутӑр,
Сайралнӑн çитрӗр хӑвӑр килӗре.
Тен, çавӑнпа хӑш чух сӑн-питӗр хурлӑ,
Тӗксӗмленет ыратнӑран чӗре.
Ӗмӗтсене пӗрне те сӳнтермерӗр
Çӗре кӗнӗ туссен ячӗпеле-
Эсир çӗкленӗ хуласен сенкерӗ
Хуллен, хуллен куçать пӗлӗтелле.

М.Волкова

Аслӑ вӑрçӑра пуçӗсене хунӑ паттӑрсене аса илсе шӑплӑх саманчӗ.

**Ертӳҫӗ**: Пирӗнпе пӗрле паян вӑрҫӑ ачисем - ӗҫпе тыл ветеранӗсем, ялта пурӗ вӗсем 11-рӗн. Чӑтма ҫук сивӗре те, шӑрӑхра та тыррине те вырнӑ вӗсем, вӑрманне те каснӑ ,выльӑхне те пӑхнӑ, фронта та пулӑшнӑ. Выҫлӑха та, тӗрлӗ чир-чӗре те парӑнман, ҫӗнтерӳ кунне ҫывхартас тесе аслисемпе юнашар тӑрӑшнӑ. Тавтапуҫ! Пуҫ таятпӑр сирӗн умра.

**Юрӑ «Песня о солдате» ( кӗв. В.Мигульӑн, сӑв.М.Агашинӑн)**

(***Сӑмах хӑнасене).***

**Ертӳҫӗ:** Кашни килтен тенӗ пекех тухса кайнӑ ҫынсем аслӑ вӑрҫа. Мӑшӑрӗсене, ывӑлӗсене ӑсатнӑ хӗр арӑмсем. Сисейнӗ-ши вӗсен чунӗсем юратнӑ ҫыннисене юлашки хут курса юлнине? Ҫапах та шаннӑ вӗсем, вилнӗ хучӗ килнӗ пулсан та пурнӑҫ тӑршшӗпех кӗтнӗ.

**6-мӗш ача:** Хапха умне тухса тӑрса
Амӑш ӑсатнӑ ывӑлне,
Анчах йӗрсе те макӑрса
Йывӑрлатман салтак чунне.
Юлашки хут ыталаса
Каланӑ вӑл хуллен ӑна:
-Пӗлетӗп йывӑр пуласса,
Нумай асап кӗтет сана.
Вилес пулсассӑн, чӗрӳне
Пар пархатарлӑн ҫӗр-шыва,
Анчах шанатӑп, ӗнен:
Киле эс таврӑнӑн сывах.
Инҫе-инҫе ҫула кайса,

Хăварнă йĕкĕт амăшне.
Каçхи тăманлă çил шăлса
Хупланă паттăрăн йĕрне.
Вăл курнă вилĕм çавине,
Вăл илтнĕ хурçă йĕнине.
Çапах пĕр пуля та унне
Юхтарайман вĕри юнне.
-Шинелĕ унăн хурçă, тен!-
Шўт тунă салтаксем тавра.
Ăна сыхланă вилĕмрен
Амăшĕн пилĕ вăрçăра.

**Ертўçĕ:** 1418 талăк хушши кĕрленĕ çак харушă вăрçă. Совет халăхĕ пĕр çын пек пулса Тăван çĕршыва хўтĕленĕ. Пехотинецсем те, летчиксем те, моряксем те, разведчиксем те, партизансем те - пурте фашистсене хирĕç кĕрешнĕ.

Нумайăшĕ паттăррăн çапăçса яланлăхах вăрçă хирĕнче юлнă. Теприсем хыпарсăр çухалнă е тата та асаплăрах шăпа кĕтнĕ хăшĕсене. Вĕсем тыткăна лексе асапланнă. Таврăннисем вара çамрăк ăрăва телей сунса: «Эпир курнине сирĕн нихçан та курмалла ан пултăрччĕ,» - тенĕ.

**Миниатюра «Аса илў»**

**Ертўçĕ:** Совет Союзне Аслă Çĕнтерў патне çитме питĕ йывăр пулнă. Вăрçă синкерĕ кашни киле, кашни урама, кашни ял-хулана кĕрсе тухнă. Пайтах çын куççулĕ, юнĕ, тарĕ юхнă. Пин-пин пурнăç вăхăтсăр татăлнă. Майăн 9-мĕшĕ – Çĕнтерў уявĕ – пирĕн халăхăн аслă, мăнаçлă, куççульлĕ уявĕ. Ăна халăх калама çук хаклă хакпа туптанă.

**Ертӳçĕ.** Пирĕн, çамрăксен, ирĕк пурнăçа сыхласа хăварассишен паттăрла çапçăма хатĕр пулмалла. Çак хаяр вăрçă çинчен самантлăха та манмалла мар. Вăрçă вучĕ çĕр çинче паянхи кун та сӳнмен-ха. Тĕнчипех террористсем алхасаççĕ, мирлĕ шăплăха пăсаççĕ. Телейлĕ пурăнма пире мирлĕ пурнăç кирлĕ. Çавăнпа та эпир яланах çапла калатпăр: «Пултăр мир ĕмĕрех!»

**Ертӳçĕ:** Аслă вăрçăра пуçĕсене хунă паттăрсене чысласа чечек кăшăлĕ хурар.

**(Кăшăл хураççĕ)**

**Ертӳçĕ:** Тайма пуç сире, вăрçă салтакĕсем!
Майăн 9-мĕш палăк пулнишĕн,
Халăха Çĕнтерӳ парнеленишĕн
Савăнăç, ырлăх туллишĕн, телейшĕн,
Тĕнчери, тӳпери сар хĕвелшĕн
Тав сана, çĕнтерӳçĕ салтак!
Мирлĕ куншăн, кун лăпкă çутишĕн,
Пурнăçа вилĕмрен хăтарнишĕн
Тав сана, çĕнтерӳçĕ салтак!

Çакăнпа аслă Çĕнтерĕве халалласа йĕркеленĕ митинга вĕçлетпĕр.

Литература:

Тукташ, И. С. Сăвăсемпе юрăсем / И. С. Тукташ. - Шупашкар, 1958. - 167с.

Егорова, Л.В. Савăнар-ха уявра / Л.В.Егорова. — Шупашкар: «Çĕнĕ вăхăт», 2010. — 84 с.